

# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Чăваш Енĕн çитес çулсенчи аталанăвне никĕслекен программăсене кĕске вăхăтра, пĕр уйăхра хатĕрлеççĕ. Кунта чи малтанах регион аталанăвĕн комплекслă стратегине асăнмалла. Ăна Республика Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев тата Патшалăх Думин депутачĕ, республикăн Экономикăн аслă канашĕн ертÿçи Анатолий Аксаков пуçарнипе Регионсен аталанăвĕн пĕтĕм тĕнчери центр пуçлăхĕн Игорь Меламедăн экспертсен ушкăнĕ хатĕрлерĕ. Çак программа мĕнпе хаклă-ха?**

**Раççей Правительствин 2020 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче кăларнă хушăвĕпе Чăваш Республикин 2020–2024 çулсенчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн уйрăм программине çирĕплетнĕ. Чăваш Ен валли федераци бюджетĕнчен 5 миллиард тенкĕ уйăраççĕ, урăхла каласан – Мускав программăна пурнăçлама çуллен пĕрер миллиард тенкĕ парĕ. Çакăнта Олег Николаевăн витĕмĕн пĕлтерĕшне те палăртмалла. Патшалăх Думин трибуни çинчен, çавăн пекех Правительство членĕсемпе иртнĕ тĕл пулусенче пĕрре кăна мар янăранă сĕнĕвĕсем, регионсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне шайлашуллă тăвассипе çыхăннăскерсем, Раççейĕн вунă регионне, çав шутра Чăваш Ене финанс енĕпе пулăшма хистерĕç.**

**Республикăра ял хуçалăхĕн малашнехи аталанăвне комплекслă майпа, пысăк аграри комплексĕсемпе фермер хуçалăхĕсен кооперацине тивĕçтерсе йĕркелемелле. Çав хушăрах ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен тĕп тĕллевĕ – тирпейлекенсене паха чĕр таварпа тивĕçтересси.**

# Пурнăç таппинчен юлмасăр

## Ялта пурăнма кăсăклă пултăр

–Ял хуçалăхĕ паян пысăк технологиллĕ, инвестицисем хывма илĕртекен отрасль шутланать. Вăл малалла аталанса пырать. Михаил Яковлевич, эсир çакăн пирки мĕн шухăшлатăр?–сăмах пуçартăм районти ял хуçалăхĕнче вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнă, Тăвай ялĕнче пурăнакан хисеплĕ ветеранпа.

–Хальхи тапхăрта районти ял хуçалăхĕнче лару-тăру начар мар. Инвесторсем пулăшнипе пысăк производствăсем йĕркелерĕç. Вĕсем техникăна çĕнетсе пыраççĕ, удобрени, сортлă вăрлăх илсе килеççĕ. Çав вăхăтра фермерсен йышĕ ÿссе пырать. Çакнашкал хуçалăхсенче уй-хирте, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тăрăшаççĕ-ха. Анчах та вĕсен техникăна çĕнетме тата ытти кирлĕ ĕçсене пурнăçлама укçатенкĕ çитерсе пыма йывăр. Çавăнпа та фермерсен хуçалăхĕсенчен пĕрлешÿсем тăвасси пирки шухăшласа пăхмалла мар-ши? Çакăн хыççăн умра тăракан тĕллевсене пурнăçлама çăмăлтарах пулмалла. Унпа пĕрлех çĕрпе анлă усă курасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Йывăççем ÿсме пуçланă лаптăксене çаврăнăша кĕртсе пĕтерессишĕн тимлесчĕ. Пурнăç кăтартнă тăрăх, специалистсене вĕрентсе хатĕрлессине ÿстерни кăна агропромышленность комплексне пысăк ăсталăхлă кадрсемпе тивĕçтерейместь. Мĕншĕн тесен çав специалистсем пысăк хуçалăхсене кăна вырнаçма пултараççĕ, фермерсен вара вĕсене ĕçлеттерме укçатенки çук. Çавăнпа вĕренсе тухнă агрономсен, зоотехниксен тата ытти специалистсен тĕрлĕ производствăсенче ĕç шырама лекет. Фермер хуçалăхне аталантарас тесен, унта ĕçлеме пысăк тавракурăмлă специалистсем вĕрентсе кăлармалла. Вĕсен ял хуçалăхĕнчи пур отрасльте те ĕçлеме пултармалла. АПК ветеранĕсен республикăри организацийĕ пулăшнипе асăннă шухăшсене пирĕн ертÿçĕсем патне çитерсе, çамрăксене ялта пурăнма кăсăклă пултăр тесе тăрăшасчĕ,–пулчĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ хурав. Унтан Михаил Яковлевич шухăша путрĕ. Хыçа юлнă çулĕсене куç умне кăларчĕ ахăртнех.

## Тăван çĕре юратсан

Ял хуçалăхĕнче вăй хунă тапхăрта районта курăмлă ĕçсем тунине, уй-хирсемпе фермăсен тухăçлăхне ÿстерессишĕн сахал мар тимленине палăртрĕ вăл. Тăван çĕре чунтан парăнни умри йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма пулăшни пирки чарăнса тăчĕ.



♦ М.Я.Яковлев

Хăй вăхăтĕнче ял хуçалăх коллективĕсене ертсе пынисене тата çĕр ĕçĕнче лайăх тĕслĕх кăтартнисене – П.Иванова, П.Воробьева, В.Данилова, В.Чкалова, Д.Александрова, Г.Кадикина, Ю.Алексеева, И.Гурина, В.Синякова, А.Ломоносова, П.Якимова, Н.Мальцева, Н.Матвеева тата ыттисене ырăпа асăнчĕ.

Иртнĕ çул вырмара пысăк çитĕнÿ тунă А.Александров («Акконд-агро фирма» АО), Н.Богачев (В.Грачев ХФХ), В.Алексеев (Илларионов ХФХ), И.Герасимов («Дружба» ЯХПК) комбайнерсен харсăрлăхĕпе кăмăллă юлнине пĕлтерчĕ ĕç ветеранĕ. Выльăхчĕрлĕх пăхнă çĕрте малта пыракан Л.Шуйкова (пĕлтĕрхи сăвăм – 7205 килограмм), Ю.Хуснутинова (7120), М.Никитина (7050), Н.Терентьева (7021, В.Грачев ХФХ), Н.Баранова (6400 кг, «Дружба» ЯХПК), В.Кузьмина (6217, Д.Алексеев ХФХ), Н.Ерастова (6082), Т.Гаврилова (5845), М.Белкова (5778 кг), О.Нилова (5778 кг, «Акконд-агро фирма» АО) дояркăсене кăçалхи сăвăм кăтартăвĕсене тата ытларах лайăхлатма сĕнчĕ, пурне те ырлăхсывлăх сунчĕ. Çапла пирĕн калаçу ерипен ял хуçалăх управленийĕнчи ĕçсене ăнăçлă йĕркелесе пынă ертÿçĕ пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çине куçрĕ.

## Пархатарлă кун-çул

...Тăвай енри Вăта шывĕ хĕрринче Вăтаяль ялĕ вырнаçнă. Пелагея Никитичнапа Яков Андреевич Андреевсем хăй вăхăтĕнче шăпах унта йăва çаврăнă. Хресчен кил-йышĕ пысăклансах пынинчен шикленмен ĕлĕк. Пĕр ача хыççăн тепри сутă тĕнчене килнĕ, хăшĕсен шăпи кĕске пулнă.

1938 çулхи утă уйăхĕнче ывăл çуралнă Андреевсен. «Пĕр тăвансенчен Тĕмер ялĕнчи аппа, Мария Яковлевна Лисова пурăнать. Унăн çемйипе туслă çыхăну тытатпăр»,–аса илÿ «кĕнекин» страницисене ерипен усрĕ ветеран.

Ĕç çумне çамрăклах çыпăçнă вăл, 7 класс пĕтернĕ хыççăн аслă пиччĕшĕпе Иркутск облаçне кайнă. Унта вăл йывăççене кăкласа çĕнĕ çĕрсем усnă çĕрте плугарьте тăрăшнă. Таврăнсан Тула облаçĕнчи Алексин хулине çул тытнă, тимĕр бетон изделийĕсен заводĕнче бетонщикре вăй хунă. Ĕçе кĕнĕ чухне ентешĕмĕр хăйĕн ÿсĕмне пĕр çул ÿстернипе ăна унтанах вун çиччĕре салтака илсе каяççĕ. Вăтаяль каччи Калининград хулинче 3,5 çул службăра пулнă. Шинельне хывсан вăл Магнитогорск хулине çитнĕ, стройкăра ырă тĕслĕх кăтартнă.

–Ĕçленĕ хушăра вĕренесси пирки тăтăшах шухăшлаттăм,–калаçу çăмхине кустарать татах Михаил Яковлевич. Професси илме ФЗО шкулне вĕренме кĕнĕ вăл. Специалист пулса тăнине çирĕплетекен документлă пулнă хыççăн металлурги комбинатне газовырубщике ĕçлеме кĕнĕ. Çав хушăра каçхи шкулта вĕренсе аттестат илнĕ.

Тăван ене таврăнсан, Шупашкарти ял хуçалăх институчĕн алăкне уçнă, (халь академи) аслă пĕлÿллĕ пулса тăнă. Тăвай районĕнчи «Советская Россия» колхоза инженера ĕçлеме янă ăна 1969 çулта. Вăл хăйĕн тивĕçĕсене вăхăтра туса пынине тÿрех асăрханă, пĕр-икĕ çултанах ял хуçалăх управленине куçарнă, 1973 çулта вара унти коллектива ертсе пыма шаннă. Каярахпа управление районти агропромышленность производствин пĕрлĕхĕ туса хунă, вăл пĕр хушă ăна ертсе пынă. 1978 çулта вара Тăвай райкомĕн иккĕмĕш секретарĕнче тăрăшма пуçланă. Унтан район администрацийĕн пуçлăхĕн заместителĕнче, каярахпа пĕрремĕш заместителĕнче вăй хунă. 2004 çулта Михаил Яковлевич тивĕçлĕ канăва кайнă.

## Ял хуçалăхне çĕнĕлĕхсем аталантараççĕ

–Илĕртÿллĕ комплекссем ялсенче пĕрин хыççăн тепри çĕкленеççĕ, ĕнесене машинăсемпе сăваççĕ. Ĕç вăйне тата вăхăта перекетлеме май паракан техника хуçаланать уй-хирте паянхи кун, пăхса ытармалла мар вĕсене. Нумаях пулмасть, ак, Раççей Правительстви Чăваш Республикин 2020-2024 çулсенчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн уйрăм программине çирĕплетрĕ. Мускав программăна пурнăçлама республикăна çуллен пĕрер миллиард тенкĕ пама пуçлать. Ял хуçалăхĕнче лайăх улшăнусем татах пулаççĕ апла,–шухăшне палăртрĕ пенсионер.

(Малалли 5-мĕш стр.)



♦ Районти агропромышленность комплексĕн ветеранĕсем

# Пурнăç таппинчен юлмасăр

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 4-мĕш стр.)

Михаил Яковлев 40 яхăн çул тăрăшнă ял хуçалăхĕнче, тĕрлĕ шайри наградăсене тивĕçлĕ пулнă. Чи хаклисем – «Ĕç ветеранĕ» медаль пур унăн, «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă ăна ĕçĕсене тÿрĕ кăмăлпа туса пынăшăн. Михаил Яковлевич – Тăвай енĕн хисеплĕ гражданинĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе те чысланă ăна.

## Туслă кил-йыш

Мăшăрĕ, Александра Николаевна, Вăрнар район хĕрĕ. Вăл та Шупашкарти ял хуçалăх институтĕнче аслă пĕлÿ илнĕ. Çамрăк агроном пирĕн района ĕçлеме килнĕ. Кармалта, юсавпа техника предприятийĕнче, 1974–2010 çулсенче вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен инспекцире тăрăшнă.

Яковлевсем пурнăç çулĕпе утма пуçлани 57 çул çитет.

шанатпăр,–калаçăва малалла тăсать Михаил Яковлевич.

Пĕлтĕр, ак, Тăрмăш ялĕнчи Владимир Николаевич Николаевпа Василий Яковлевич Ялугин пурăннă çуртсем çине Асăну хăмисем уçнă районти АПК ветеранĕсен канашĕ тăрăшнипе.

В.Николаев колхоз производствинче хăй организатор пулнине, ĕçшĕн çуннине, çынсемшĕн тăрăшнине кăтартса панă. «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ята тивĕçлĕ пулнă вăл.

В.Ялугина вара хастарлăхпа, пурнăçри активлăхпа тата тÿрĕлĕхпе палăрнăшăн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденпа, «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ятпа чысланă. Василий Дмитриевич Дмитриев Киччĕ ялĕнче пурăннă, унăн çурчĕ те «Ку çуртра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ, ял хуçалăх производствин организаторĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орден кавалерĕ, Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ пурăннă» тесе çырнă хăмапа пуянланнă иртнĕ çул.



♦ Шупашкарти ентешлĕх уявĕнче, архивран

Виçĕ ача пăхса çитĕнтернĕ, лайăх воспитани панă туслă мăшăр. Ывăлĕ, Юрий, Ярославль облаçĕнче пурăнать çемйипе, мăшăрĕпе икĕ ача пăхса ÿстернĕ. Лариса Тăвайри больницăра вăй хурать, икĕ ывăл Семеновсен. Ирина упăшкипе Мускав облаçĕнче йăва çавăрнă, вĕсен – виçĕ ача. Кил-çемьере пурте йĕркеллĕ ялти хисеплĕ ветеранăн. Ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнаççĕ вĕсем мăшăрĕпе Александра Николаевнапа. Ăста алăллăскерсем çывăх çыннисене вăй çитнĕ таран пулăшассине хăйсен ырă тивĕçĕ вырăнне хураççĕ халĕ те. Ачисемпе мăнукĕсем те чи хаклă çыннисемшĕн темĕн тума та хатĕр.

Яковлевсен çулĕсем пур пулин те, ĕçсĕр лармаççĕ. Пахчара вăй хураççĕ, тĕрлĕ çимĕç çитĕнтереççĕ, чăх-чĕппе качакасем усраççĕ.

Михаил Яковлевич кашни çĕнĕ куна тĕрлĕ хусканусенчен пуçлать те каçченех тупать икĕ алли валли ĕç. Ăста пăта çапмалла, тÿрех тăвать ку тивĕçе.

Пушă вăхăтра тĕрлĕ пуçватмăшсем тупса чунне пусарать, хаçат-журнал вулать. Ял хуçалăх ыйтăвĕсене хускатакан телерадиопередачăсемпе кăсăкланать.

## Вăл обществăлла ĕçре те хастар

Обществăлла пурнăçра пысăк активлăх кăтартать М.Яковлев. Агропромышленноç комплексĕн республикăри союзне туса хунăранпа, 2012 çултанпа, унăн районти уйрăмне ăнăçлă ертсе пырать. Республикăри мероприятисене те хутшăнать вăл.

Районти агропромышленность комплексĕнче тăрăшса тивĕçлĕ канăва тухнисем патĕнче пулаççĕ вĕсем, юлташĕсен ĕмĕт-тĕллевĕсемпе, пурнăç условийĕсемпе кăсăкланаççĕ. Пурнăçран уйрăлса кайнисен вилтăприйĕсем çине çитсе асăну кунĕсем ирттереççĕ. –Ватă пулсан та ахаль лармастпăр эпир. Аслă ăрури çынсене пурнăç сăпкинче кăшт та пулин çăмăлтарах, савăнăçлăрах пултăр тесе тимлетпĕр. Паянхи çамрăксем вара йывăрлăхсене çĕнтерсех пырасса

М.Яковлев ертсе пыракан обществăлла организаци Енĕш Нăрваш ялĕнче пурăннă ял хуçалăх ĕçĕн ветеранĕсене – Василий Софронович Софроновпа Анатолий Лазаревич Лазарева та манман.

В.Софронов ферма ертÿçи те пулнă. Вăл унта вăй хунă çулсенче выльăхсен йышĕ ÿссе пынă, тухăçлăхĕ те районти вăтам кăтартусенчен пысăкрах пулнă. Ăна пуçарулăх кăтартнăшăн Хисеп Палли тата Ленин орденĕсемпе «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чысланă.

А.Лазарев «Красная Чувашия» колхозра тракторист, сварщик, слесарь тата мастер-наладчик пулса тăрăшнă. Хастар арçынна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, «Ĕçри паттăрлăхшăн: В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа» медальпе наградăланă. «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чысланă. Çакнашкал паллă ветерансен районта сахал мар. Асăну хăмисене хальлĕхе пурĕ 18 çурт çумне çирĕплетнĕ. Çак сумлă ĕçе малалла тăсма шухăшлаççĕ вĕсем.

Кашни çулах агропромышленность комплексĕн ветеранĕсен Канашĕн районти уйрăмĕн черетлĕ пухăвне йĕркелеççĕ.

Уйрăм ертÿçи М.Яковлев, ак, кăçал та пĕлтĕрхи ĕçсем çинчен чаранса тăнă, умри тĕллевĕсене палăртнă, пухăннисене вăрăм ĕмĕр суннă. Ветерансен организацийĕ ырă ĕçсем пурнăçлать кăна мар, хăйĕн йышне пысăклатса пырать. 2019 çулта, акă, виçĕ çынна ял хуçалăх ветеранĕсен пĕрлĕхĕн членне илнĕ.

«Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерÿ тунăранпа – 75 çул» юбилей медальне АПК ветеранĕсен союзĕн членĕсене, пурĕ 23 çынна, панă.

М.Яковлев – производство йĕркелÿçи, парти тата совет работникĕ, Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 82 çула çывхарать пулин те пурнăç таппипе тан утать, пирĕншĕн пуриншĕн те ырă тĕслĕхлĕ çын пулса тăрать.

**А.НИКИТИНА.**

---

**АСЛĂ ÇĔНТЕРĔВЕ – 75 ÇУЛ**

## Палăксене юсаса çĕнетнĕ

**Тăван çĕршыв Аслă вăрçинче пуçĕсене хунă, кайран пурнăçран уйрăлнă салтаксене асăнса пурĕ район территорийĕнче 36 палăкпа обелиск лартнă. Тăвай ялĕнче, «Тыл ĕçченĕсене» стела пур. Вĕсене кашни çулах юсаса, çĕнетсе тăраççĕ. Аслă Çĕнтерÿ тунăранпа 75 çитнĕ май пур ялти палăксемпе обелисксене юсанă, çĕнĕрен тунисем те пур, вĕсен йĕри-тавра тасатса тирпейленĕ, чечек клумбисем тунă.**

Çынсен пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе Тăрмăшри ял тăрăхĕнче, «Халăх пуçарăвĕсем çинче никĕсленнĕ общество инфратытăмне аталантарасси çинчен» программăна пурнăçа кĕртсе, «Тăван çĕршывăн 1941–1945 çулсенчи Аслă вăрçăра вилнĕ ентешĕмĕрсем ĕмĕрлĕх асра» обелискпа вăрçăра пуç хунă салтаксене асăнса лартнă монумента юсассине вĕçлерĕç. Тăвайри Мухтав Монументне те юсама тытăнĕç кĕçех.

**А.ТИМОФЕЕВА.**

---

**ÇЫН ТАТА ЗАКОН**

## Коррупципе кĕрешмелле

**Коррупцие асăрхаттарас тата ăна хирĕç кĕрешес енĕпе организацисем туса хатĕрлемелли тата йышăнмалли методика сĕнĕвĕсене Раççей Федерацийĕн Ĕçлев тата социаллă хÿтĕлев министерстви 2013 çулта ноябрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă. Çак требовани харпăрлăхăн кирек хăш формине тытса пыракан организацие те пырса тивет. Ăна мĕнле пурнăçланине район прокуратури пĕр вĕçĕмсĕр тĕрĕслесе тăрать.**

2019 çулхи тĕрĕслевсем Тăвай енри хăш-пĕр предприятисем федерацин «Коррупцие хирĕç кĕрешесси çинчен» законăн 13.3 статйине пăснине, коррупцие асăрхаттарас тĕлĕшпе право акчĕсем йышăнманнине, коррупцие хирĕç кĕрешесси çинчен Положенисем туса хатĕрлеменнине тата çирĕплетменнине кăтартса панă.

**А.ДАНИЛОВ.**

## Хĕç-пăшала саккунсăр упранăшăн

**Тăвай районĕнчи пĕр ялта пурăнакан 56 çулхи арçынна РФ УКн 222 статйин 1, 222.1 стайин 1 пайĕсенчи преступленисене тунă тесе айăплав акчĕсем çырнă.**

2010 çулхи январь уйăхĕнче вăл Мускаври пĕр метро станцийĕнче палламан çынран пистолет евĕрлĕ хăй аллипе тунă пăшал илнĕ. Ăна килĕнче зал пÿлĕмĕнчи кĕтеслĕ диван хыçĕнче упранă. Вăлах 1982 çулта Свердловск облаçĕнчи пĕр сунар магазинĕнче пĕр пĕлмен çынран сирпĕтекен хатĕрсем (тĕслĕхрен, тар) туяннă, килне илсе таврăннă пулнă. 2020 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче шырав вăхăтĕнче Тăвайри полици пайĕн сотрудникĕсем тупса палăртнă хĕçпăшалпа сирпĕтекен хутăшсене. Вĕсене саккуна пăсса упранăшăн икĕ статьяпа явап тытма тивет арçыннăн. Вăл халиччен судпа айăпланман. Хальхи вăхăтра ниçта та ĕçлемест.

Хĕç-пăшала, боеприпассене, сирпĕтекен хутăшсемпе хатĕрсене саккунсăр туяннăшăн, упранăшăн уголовлă майпа явап тыттарса ирĕкрен хăтарма, штрафлама, обязательнăй ĕçсене явăçтарма пултараççĕ.

**О.АФОНИНА,**
**полици пайĕн капитанĕ.**

---

**ТИМЛĔХ ЫЙТАТЬ**

## Кирлĕрен çыратăп

**Эпир пурăнакан Чукмаркас (Ленин) урамĕнче вак чул сарса çул тăвас ĕçсем пыраççĕ хальхи вăхăтра. Ял çыннисемшĕн пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе пурнăçлама подрядчик тĕрлĕ техникăпа рабочисем явăçтарнă. Пысăк машинăсем хăйăр, вак чул турттараççĕ.**

Çав вăхăтрах Тăвай–Чутей трасси çинчи Вăтаяль остановкинче автопавильон вырнаçтарасси питĕ вăраха кайрĕ. Ахăртнех, вăл никама та пăшăрхантармасть пулмалла. Асаннă асфальтлă çула хута янăранпа миçе çул иртрĕ ĕнтĕ. Çавăнтанпах павильон туса лартаймаççĕ кунта. Унччenхине, кирпĕчпе бетон плитасенчен тунăскере, çирĕпскере, çул тума тытăнсанах кусран сухатрĕç. Ял çыннисен халĕ унта шăрăха, е сивĕпе çумăра пăхмасăр çара уйра автобус кĕтме тивет. Çапла «тимлеççĕ» çынсемшĕн.

Тепĕр йывăрлăх – ялти магазинта телефон çукки. «Тăвайри кооператив» ертÿçисем ăна кĕртме укçа çукки çине йăвантараççĕ. Шăнкăравласа пĕлесчĕ туянма палăртнă япала магазинта пурри-çуккине – май çук. Ветерансемшĕн, ватă çынсемшĕн питĕ начар ялти лавккара телефон пулманни. Уссăр танккама пĕртте çăмăл мар çитмĕлтен е сакăрвуннăран иртнĕ çынсене. Çавăнпа райпо вăй çитерейĕмесен ялти лавккана телефон кĕртмешкĕн халăхран укçа пухмалла мар-ши тесе те шухăшлаççĕ ял çыннисем.

**Илья ГЛАДКОВ,**
**иккĕмĕш ушкăн инваличĕ. Вăтаяль.**

## Тăвată пушар тухнă

Тăвай енри надзорпа профилактика ĕçĕсен пайĕ кăçал район территорийĕнче 4 пушар (2019 – 11 пушар) тухнине шута илнĕ. Вутçулăмра çын вилнĕ, аманнă тĕслĕх пулман. Пушарсем пурĕ 280000 тенкĕлĕх (2019 – 448000 тенкĕлĕх) сиен кÿнĕ. Тушкил ял тăрăхĕн территорийĕнче вут-кăвар тухасси ÿснĕ.

**Д.ГРИГОРЬЕВ.**